34-107

С. П. ПЕТРОВ

# ЙАЛСОВЕТСЕН ӖҪНЕ БОЉШЕВИКЛА ОРГАНИЗАЦИЛЕМЕЛЕ

ЧĂВАШИЗДАТ—ПАРТҪЕКТĂР
Шупашкар—1934

С. П. ПЕТРОВ

# ЙАЛСОВЕТСЕН ĔҪНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ОРГАНИЗАЦИЛЕМЕЛЕ

1. Парти Обкомĕн V-мĕш пленумĕнче, нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче тухса калани
2. Советсен отчотпа суйлав кампанин малтанхи итогĕсемпе йалсоветсен ĕҫĕсене организацилесси ҫинчен ПСК(б)П Чăваш ОК V пленумĕ, 1934 ҫулта нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановлени

ЧĂВАШИЗДАТ — ПАРТҪЕКТĂР
ШУПАШКАР — 1934

Редактор И. Д. Кузнецов.
Тех. редактор А. Т. Быков.
Послано в производство 19-XII 34.
Подписано к печати 22|XII 34
Уполн. Чувашлита № 1510. Заказ № 1669.
Чувашгиз № 204 Ф. Б. 62Х94|32 Тираж 15000 экз. Об'ем 1 пл.

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза г. Чебоксары, Канашская, 16



## 1. Ҫěнěрен суйланă йалсоветсен ěҫне организацилесси—пысăкран та пысăк политикăла задачă

Йулташсем! Йалти советсен—пролетари диктатурин йалти органěсен ěҫне организацилес ыйту калама ҫук пысăк выранта тăрат. Мěншěн тесен, халӡхи советсене пит те пысăк историле задачăсем тивеҫҫě. Халě суйланă советсен економикăра та, ҫынсен ăстăнěнче те капиталисăм йулашкисене пěтермеле, хамăр ҫěршывра социалисăм обшчěстви (йěрки) туса ҫитермеле, хамăр ҫěршывăн хăватне сыхлăх тěрекне татах вăйлатмала. Халě суйланă советсен Чăваш республикинче чухăнпа вăтам хресченсене талкишпех колхоза куҫарса ҫитермеле, тырпул тухăҫлăхне ўстерес, выӡăх·чěрлěх ěрчетес задачăсене татса памала. Ҫак советсеннех Чăваш республикинче индустриализаци ěҫне пур майсемпе те хăпартмала. Ҫак советсен Сталин йулташăн аслă лозунгне—рабочисемпе колхозниксене пурне те пуйан та куӡтурăлă тумала тенине чаплăн пурнăҫа кěртсе ҫитермеле. Ҫак советсен Чăваш республикине социалисăмла ҫěршыв

тумала, республикăна пур йенчен те кăтартулă республикă тумала.

Çĕнĕрен суйланă йалсоветсен иккĕмĕш пйатилеткăра—классăр общчĕствă тумали пйатилеткăра тăракан пысăк задачăсене пĕтĕмпех тăна илсе, халех ĕçе тытăнмала.

Йалсоветсен иртнĕ составĕ социалисăм никĕсне хывма нумай вăйхăват хучĕ. Парти йертсе пынипе советсем çак задачăна хисеплĕн пурнăçлама пултарчĕç. Партин XVII-мĕш сйесĕ—иккĕмĕш пйатилеткăра социалисăм çуртне туса çитерме кăтартса пачĕ. Çĕнĕрен суйласа лартнă советсем умĕнче çавăн пек хисеплĕ, историлĕ задачă тăрат. Епĕр халь çĕнĕрен суйласа лартнă йалсоветсен ĕçне организацилес задачă умĕнче тăратпăр.

Паллах ĕнтĕ, çĕнĕ йалсоветсен ĕç майĕсемпе меслечĕсем иртнĕ тапхăрта ĕçленĕ советсен ĕç майĕсемпе меслечĕсенчен уйăрлса тăраççĕ. Çĕнĕрен суйланă йалсоветсен пĕр икĕ çул хушшинчех капиталисăм йĕркин йулашкисене пĕтермеле, йала социалисăмла урăхлатса çĕнетессине вĕçне çитермеле. Иртнĕ тапхăрти йалсовчĕ ĕçхресченĕсен хастарлăхне ÿстересшĕн, вĕсене социалисăм тăвас ĕçе хутшăнтарасшăн кĕрешнĕ пулсан, çĕнĕ советăн çак ĕçе йăвашлатмасăр, колхозниксен тата тÿрĕ йединоличниксен ÿснĕ хастарлăхне тĕрĕс организацилес, ăна кирлĕ çĕре йарас тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле.

## 2. Йалсовета панă наказ—вăл массăсене ĕçе хутшăнтарма пулăшакан меслет

Ĕççыннисен хастарлăхĕ нихăçанхинчен ытла ÿссе çитĕнчĕ. Депутатсене парса хăварнă наказсем çинче çав ÿснĕ хастарлăха кăтартса панă. 1930 çулта наказсене çырнă çĕрте суйлакансем 63 проц. хутшăннă пулсан, кăçалхи суйлавсенче наказсем парас ĕçе суйлакансем 92 проц. хутшăннă. Патшалăхăн пурнăçĕнчен арçынсемпе пĕр ĕретре тăрса, хĕрарăмсем суйлава 90 проц. йахăн хутшăнчĕç. Ку татах та паха йапала. Депутатсене парса хăварнă наказсем суйлакансен политикăлă хастарлăхĕ ÿснине, конкретлă задачăсене куçкĕскинчи пек кăтартса паракан документсем пулаççĕ, йалсоветсен хăйсен малашнехи ĕçĕнче çав задачăсене пурнете пурнăça кĕртмеле. Суйлакансене хăйсене пур ĕçе хастаррăн хутшăнтармасăр наказсене ăнăçулăн пурнăçласси çинчен шухăшламали те çук. Вăл наказсене кабинетра ларса мар, пĕр предçедатĕл йе йалсовет пленумĕн вăйĕпе кăна мар, мĕн пур ĕççыннисен вăйхăвачĕпе пурнăça кĕртмеле. Йалсоветăн тăтăшах йертсе пымала, кашни участкăрах çекцисен тата хăйĕн членĕсен ĕçĕсене организацилеме пĕлмеле.

Депутатсене панă наказсене йалсовет çекцисемпе депутатсен ушкăнĕсем урлă план тăрăх пур-

năçа văхătра кĕртсе пымала. Наказсене аван пурнăçлани йалсовета лайăх чапа кăларать, унăн вăйне нумайлатать. Çавăн пек йалсовета нимĕнле йăвăрлăх та, вăхăтлăха ĕç ăнманни те хăрушă мар.

## 3. Çитĕнсе пымали майсем пысăк, вĕсемпе лайăхрах усă курмала

Хаљ суйланă йалсоветсем социалисăм тăвас тĕлĕшри тĕп йăвăрлăхсене татса панă вăхăтра ĕçе тытăнаççĕ. Аслă çулпуçĕ Сталин й. ăслăн йертсе пынипе парти çулйĕрне пурнăçлани, малала хăвăрт ўссе пымали майсем туса пачĕ. Çав майсемпе усă курас килни, усă курма пĕлни пулсан, епĕр тĕлĕнмеле ĕçсем тума пултаратпăр. Куçа курнакан йапала мари вара, йулташсем,—хула техникипе хĕçпăшалланнă колхозсем пулман пулсан, епĕр кăçал выçă ларнă пулăттăмăр. Тырпулшăн бољшевикла кĕрешсе, кăçал епĕр трактăрсенчен тата минерал çăнăхĕсенчен пуçласа, ĕçе кĕске срукра пĕтерессишĕн кĕрешессине çитеччене х, агротехникăпа лайăхрах усă куртăмăр. Тырпул начар пулмарĕ, патшалăха пама та, патшалăха сутма та, колхозниксене тăраначчен çисе пурăнма та, выљăхсене тăрантарса усрама та çитет.

Çакă вăл пирĕн малала ўссе пымали майсем пысăкки çинчен, вĕсемпе туллирех тата лайăхрах усă курма кирли çинчен каласа парать. Вĕсене ăнă-

çулăн пурнăçлас тесен, йалсоветсене çĕнĕле, чăнахах болъшевикла, партин XVII-мĕш сиесĕ кăтартса панă пек ĕçлеме вĕрентмеле.

## 4. Йалсоветсене болъшевикла ĕçлеме вĕрентмеле

Йалсовет депутачĕсем хушшинче влаç органĕсене кăçал пуçласа суйланнă йулташсем 60 процентран кайа мар, вĕсем—колхозниксем, пуринчен ытла колхозниксем-ударниксем. Çапла ĕнтĕ йалсоветсене питĕ аван çынсем хутшăнчĕç. Вĕсем йалсоветсем ĕçлеме, кĕрешме пултарнине вăйлатаççĕ. Депутатсене, тата йалсоветсене пирĕн болъшевикла ĕçлеме вĕрентмеле. Йалсоветсен иртнĕ вăхăтри ĕçĕнче (вĕсене йертсе пырас ĕçре те) пысăк çитменлĕхсем пулнă. Вăл, чи малтан, массăсене организацилес вырăнне хăтăрса тутарас меслетсемпе ĕçлесе пынинче пулаť. Çак çитменлĕхе, ĕнерхи кунăн хăнăхăвне мĕнле пулсан та часрах пĕтермеле.

Кирлĕ мара хăтăрни (администрацилени) вăл, ĕç йапăх пынине кăтартса параť, вăл активпа ĕçлес килменнинчен, массă хушшинче ĕçлес килменнинчен тухса тăраť. Оппортуниссем, кабинет чиновникĕсем тата клас тăшманĕсем час-часах администрацилеме тĕртнĕ. Йалсоветсене пăрăнчăксем тума тĕртни, вĕсемшĕн аван пулнă. Пăрăнчăксем тутарса, вĕсем йалсоветсен йагне çĕртесшĕн, хуçа-

лăхпа политикăла кампанисене иртерме чăрмантарасшăн тăрăшаççĕ.

Администрациленине революци саккунлăхне пурнăçа çирĕп кĕртнипе пăтраштармала мар. Совет саккунĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртесси йалсоветсен чи малтан тумали ĕçĕ пулса тăрат.

Анчах совет саккунĕсене пурнăçа кĕртнĕ чух та йалсоветсен массă хушшинче ĕçлессине, ĕçе активиссене, колхозниксене ударниксене, хастар хĕрарăмсене хăйсене мĕнле пулсан та ытларах хутшăнтарассине чи малти плана лартмала. Хăшпĕр чух епĕр йединоличниксен пĕр пайĕ саботаж тунине тĕл пулатпăр пулсан, çакна пĕлме кирлĕ: саботажниксем йалсовет йе унăн предçедатĕлĕ пĕччен, обчă ĕçне ĕççыннисене хутшăнтармасăр, ĕçленĕ чухне хăйулăланаççĕ.

## 5. Инструктăрсен задачисем çинчен

Иалсоветсене чăнахах массăна организацилеме вĕрентес тетпĕр пулсан, уполномоченнăйсем йарас йĕркене вуçах пĕтермеле, ун вырăнне инструктăрсен ĕçне кирлĕ пек йĕркелемеле.

Тĕпĕçтăвком йенĕпе те, Çĕрĕç халăх комиссариачĕ йенĕпе та, Финанс халăх комиссариачĕ йенĕпе те, Чăвашсойуз йенĕпе те, тата ытти йенсемпе те инструктăрсем нумай, анчах вĕсенчен тулкă сахалтарах-ха. Мĕншĕн тесен вĕсем парти XVII-мĕш

сйесĕн решенисенчен килекен хăйсен задачисене пайан кун та ăнланса илеймен.

Йалсоветсен ĕçне тĕрĕс организацилес çĕрте инструктăрсем çине шутсăр пысăк ответлăх йăтăнат. Инструктăр хăйне хушнă ĕçе пур участăкра та тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлмеле. Инструктăр „вăтам цыфрăсем“ йе „пĕтĕм районĕпе кăтартнă“ цыфрăсем çине пăхса ĕçлеме пултараймаст. Çак йалсовет çакăн пек задани тăрăх мĕншĕн йулса пынине, йулса пынине хăвăрт пĕтерме мĕн-мĕн тума кирлине инструктăр йаланах витĕр пĕлмеле. Инструктăр йаланах ĕçĕн чи йăвăр участкине çитсе ĕлкĕрмеле, çитменлĕхсене пĕтерме йалсовета вырăнтах пулăшмала, мĕн тума палăртнине пурнăçа кĕртмесĕр, ĕçе тӳрлетсе çитермесĕр çав участăна хăвармала мар. Çавăн пек ĕçлесен кăна инструктăрăн йачĕ чапа тухат, районри организацисем те унăн ĕçне туйса пĕлме пултараççĕ.

Йалсовет ĕçĕнчи пайан татса памалли ыйтăвĕсене, паха опыта, паллă çитменлĕхсене инструктăрăн вăхăтра йарса илмеле. Паха опытпа вăхăтра усă курас, йăнăш тăвасран вăхăтра систерес йе тунă йăнăша вăхăтра тӳрлетес тесен, вĕсем çинчен йертсе пыракан органсенче ыйту лартмала.

Инструктăр, никамне мĕнне пăхмасăр большевикла самокритикăна пуçаракан пулмала. Вырăнти тата тĕпри учрежденисенчи çитменлĕхсем çинчен,

вĕсем хăшпĕр ĕçе манса хăварни çинчен кирлĕ çĕрте ыйту лартмала Инструктăрсем йалсоветне самокритикăна, ĕçри çитменлĕхсене палăртма, вĕсене тӳрлетме вĕрентмеле. Инструктăрăн председатĕл вырăнне хăйĕн ĕçлемеле мар, ирĕксĕрлемеле мар, йалсовет председатĕлĕсене пуринчен ытла ĕçре вĕрентсе пымала.

Иртнĕ вăхăтра йалсовет председатĕлĕсене пĕчĕк айăпшăнах, час-часах саккун урлă каçса, пачки-пачкипе сута пани пулнă, йăнăша тӳрлетес йалти влаçăн чăн работникĕ пулма пулăшас вырăнне часах ĕçрен кăларса пăрахни пулнă. Малашне çавăн пек хăтланма чармала. Председатĕлсене тата йалсовет членĕсене вĕрентсе пырас ĕçе чăннипех тытăнмала.

## 6. Чăрсăрланса-сӳнсе ĕçлессине пĕтерсе, план тăрăх ĕçлеме тытăнмала

Вырăнсене уполномоченнăйсем йарса ĕçленинчен тата тепĕр çитменлĕх шăтса тухрĕ. Вăл—пĕрре чăрсăрланса, тепре сӳнсе ĕçлени. Иртнĕ çулсенче районсенче час-часах квартăл заданисене йулашки 3—5 кун хушшинче тултарса пынă. Çавăн пек ĕçленĕ чух пăрăнчăксенчен, хăтăрса ĕçлетерессинчен мĕнле хăтăлма пултăр? Хăтăлма питĕ йăвăр. Анчах, парти Обкомĕ пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçленине пула, республикăра пăрăнчăксем ну-

майах пулман. Обком кашни фактӑ çине вӑхӑтра çаврӑнса пӑхнӑ, пӑрӑнчӑксем тӑвасран асӑрхаттарсах тӑнӑ, пӗр-пӗр вырӑнта пӑрӑнчӑк тунах пулсан вӑхӑтра тӳрлетнӗ.

Пирӗн малашне пӗтӗм ӗçе, уйрӑмах йалсоветсен ӗçне болђшевикла йӗркелес тетпӗр пулсан, уполномочӗннӑйсем йарса ӗçлес йӗркене, ӗçри обезличкӑна, чӑрсӑрланса-сӳнсе ӗçлес меслете, хуçалӑхпа политикӑла кампанисене черетле туса пыраслсине тата хӑтӑрса ӗçлетерессине болђшевикла хӗртнӗ тимӗрпе çунтарса кӑлармала.

Республикӑра пӗтӗм ӗçе кӑтартулӑ организацилес тетпӗр пулсан, йалсоветсене куллен, тӑтӑшах конкретлӑ йертсе пымала, вӗсене массӑна организацилеме хӑнӑхтармала.

*Калинин* йул. лайӑх йалсовет çинчен акӑ мӗн каланӑччӗ:—„лайӑх йалсовет пысӑк ыйтӑвӗсене сӳтсе йавма актива пухать, актив мӗн каланине итлет, татӑклӑн решени йышӑнать, ӑна активпа тата пур ӗççынnисемпе пӗрле вӗçне çитиччен çине тӑрса пурнӑçа кӗртет, çитменлӗхсене тата асӑрхамасӑр йулнисене вӑхӑтра тӳрлетет. Лайӑх председатӗл вӑхӑтра ӗçлеме те, вӑхӑтра канма та пӗлет“.

Йалсовет председатӗлӗн акӑ мӗнле ӗçлеме вӗренмеле,—пур заданисем те план тӑрӑх, прорыва кӗрсе ӳкмесӗр кунран кун тулса пыччӑр, кашни депутатӑн конкретлӑ хушу пултӑр, ӑна вӑл вӑхӑтра

пурнăçлатăр. Йалсовет предçедатĕлĕ хăй хушнă ĕçе мĕнле пурнăçланине çирĕп тĕрĕслесе пымала, актив пуххинче тата пленумра уйрăм депутатсен тата активиссен ĕçĕсене сўтсе йавмала. Йалсовет предçедатĕлĕ депутатсене аван тунă ĕçшĕн хавасланса çĕкленме вĕрентмеле, чи лайăх активиссене пултармалли майсем тупмала, анчах никама та мăнăçланма, каппайма памала мар, йалсовет тата уйрăм членсем ĕçĕнчи пĕчĕк çитменлĕхсене те курса илмеле, вĕсене асăрхаттарса, тўрлеттермеле.

Йалсовет предçедатĕлĕн хуçалăхпа кулътура строителстви тĕлĕшпе патшалăх панă обйазатĕлствăсене тата выранти плана срукра тата мĕнле те пулин лайăхрах пурнăçлас, тесе тăрăшмала. Çитĕнĕвéсем, унăн çĕнĕ çитĕнĕвсем туса пыма пултарас пулаť.

## 7. Клас тăшманĕсемпе кĕрешнĕ çĕрте сыхлăха ўстермеле

Çакăнта тата тепĕр пысăк ыйту тухса тăраť. Вăл—классăла сыхă тăрассине, клас тăшманĕпе кĕрешнĕ çĕрте сыхă пулассине ўстересси пулаť. Отчотпа суйлав кампани клас тăшманĕн йулашкисем, пуçпех çĕмĕрсе тăкман кулаксем хĕçпăшала пăрахманнине çав-çавах пĕтерскерсем вилес пек хайар кĕрешнине кăтартса пачĕ. Йал активисĕсене хĕненĕ, вĕлерме тапăннă тĕслĕхсем те пулчĕç. Кулаксем ушкăнлă жалăбăсем парса, парти тата совет ра-

ботникĕсем çине елек пама пăхнă тĕслĕхсем те пулчĕç. Йулашки вăхăтра жалăбăсем тĕрĕс марри час-часах тĕл пула пуçларĕ. Çакă вăл, уççăн кĕрешме вăй çитменнине кура, клас тăшманĕ хăйне йурăхлă вăхăта кĕтсе илсе, кĕтессем хӳттипе кĕрешнине кăтартса парать. Йулташсем, партипе совет работникĕсене сыхă пулма, клас тăшманĕ ирсĕр ĕç тунине витĕр курма вĕрентмеле. Парти Обкомĕ çак ыйтăва пĕре те куçран вĕçертменнине, Куславкка, Шăмăршă, Пăрачкав т. ытти районсенчи ĕçсенчен пĕтĕм паргорганизацишĕн тивĕçлĕ урок тунине есĕр аван пĕлетĕр. Совет оргăнĕсем çак урокпа кирлĕ пек усă курнă, тесе калама пулмасть, анчах та вĕсем класа сыхă тăма вĕрентсе хăнăхтарас, совет работникĕсене идейлăхпа политикăла воçпитани парас тĕлĕшпе начар ĕçленĕ тесе калама пулатех. Советсен политшкулĕсене пуçарса йатăмăр, анчах советсен тĕпри тата районри оргăнĕсем çак пуçару малала вăйланса пытăр, тесе тăрăшнийех курăнмарĕ.

## 8. Йалти активăн идейлăхне тата культурлăхне хăпартмала

Депутатсемпе йалти актив хушшинче тăтăшах политикăла ĕçе туса пымасан, йалсоветсен класла сыхă тăрассине ӳстересси çинчен, массăна организацилеме пултарнине вăйлатасси çинчен шухăш-

ламали те çук. Чи малтанах председателсен, йал совет членĕсен хăйсене хаçатсем, „Власть советов" журнала, политикăла литературăна вуласа пыма вĕрентмеле. Вăхăтран вăхăта депутатсене районсене тата Шупашкарта кĕске срукла курссенче вĕрентмеле. Курссене йертсе пыма пултаракан руководителсем уйăрса памала. Вĕсемсĕр пуçсăр, кашни йалсовет çумĕнчех советпа колхоз активĕн политшкулĕ ĕçлемеле. Халăха çутта кăларакан оргăнсем çак шкула пĕрмайах пулăшса пымала. Депутатсен тата йалти активиссен çак шкулта умра тăракан ыйтăвсене пĕрмайах вĕренсе пымала, çапла туниле кашни активиса хуçалăхпа политикăла кампанисене мĕншĕн иртернине тăнланса илмеле тумала.

Йалсовет председателĕсен заочнă вĕренессине, радио тăрăх т. ы. майсемпе специалиссем калаçусем иртерессине организацилеме кирлĕ, организацилеме те.

Заочно вĕренӳ йалсовет работникĕсене агрономийе тата зоотехникăна вĕренес тĕлĕшпе уйрăмах хытă пулăшма пултарать. Калăпăр, профессăр йалсовет председателĕсене тырпул тухăçне ӳстересси тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине лайăхлатасси çинчен лекци вуласа парать пулсан, — усăран пуçне нимĕн те пулас çук.

Епĕр рабочисене тата колхозниксене пурне те пуйан та культурăлă пурнакансем тăвасшĕн кĕрешетпĕр. Вăл ĕнтĕ йалсовет работникĕсем куль-

турăлă пурнас тĕлĕшпе те, ĕçлес тĕлĕшпе те примерлă пулнине пĕлтерет.

Ку таранччен йалсовет канцељари çине сахал пăхнă пулсан, малашне ăна тĕпренех улăштармала. Йалсовет канцељари йалта чи куљтурлă çурт пулса тăмала. Унтан тусана тата пылчăка хăваласа кăлармала, çĕмĕрлсе пĕтнĕ пукансене кăларса утмала, сурмали савăтсем лартмала, çеçкесем лартмала, кăмакана шуратмала, çтенасене ытлашши плакатсенчен тата лозунгсенчен тасатса, кирлисене кăна хăвармала. Йалсовет предçедателĕн хăйĕн кабинет, унта телефон тата радиоприйомник пулсан, счетоводăн тата çекретарĕн уйрăм пӳлĕм пулсан, пит те аван пулнă пулĕччĕ. Канцељарине пыракансем ĕçлеме чăрмантараççĕ. Пыракансем ваљљи, актива йе çекцисене канашлăва пухăнма пĕчĕк залă кирлĕ. Малтанах ку пĕчĕк ĕç пек туйăнĕ тен. Анчах, йулташсем, вăл вактĕвексем пысăк ĕçе тăраççĕ, мĕншĕн тесен сăмах куљтурăлă ĕçлесси çинчен, йалсовет авторитечĕ çинчен пырать. Ахаљтен мар ĕнтĕ йалсовет канцељарисем çинчен партин тĕп органĕ „ПРАВДĂ“ çырать.

Çапла ĕнтĕ, йалсовет работникĕсем иккĕмĕш пиатилеткăн задачисене халичченхинчен лайăхрах пурнăçлаччăр тесен, вĕсен политикăла пĕлӳне, куљтурлăхне, массăна организацилеме пултарнине куллен ӳстерсе пымала.

## 9. Йалсоветсен ҫывăхри паллăрах задачисем

Унтан кăштах йалсоветсен ҫывăхри задачисем ҫинчен калас пулаť. Йалсоветсен ҫывăхри паллăрах задачисем ҫаксем пулаҫҫĕ:

Пĕрремĕш, выљăхсен йышне упрассипе нумайлатасси. Пирĕн хаљ вырăнĕ вырăнĕпе выљăхсене пăрахса пĕтереҫҫĕ. Вăл спекуљантсемпе, выљăхсене пĕтерекен организатăрсемпе, начар кĕрешнинчен, чылайăш тата мĕн пур пек выљăх апачĕсемпе усă курма пĕлменнинчен килет Шăнкăртам тата Аслă Патăрйел районĕсенче хăшпĕр колхозсем ыраш улăмне извĕҫлесе пăхнă. Епĕр кĕтнĕ пекех, колхозниксем извĕҫленин уссине часах туйса илчĕҫ. Ыраш улăмне пирĕн час-часах ҫĕртсе йараҫҫĕ, ҫунтараҫҫĕ. Анчах ăна выљăхсене апатланă ҫĕре йарса, унпала выљăхсен йышне упрас тата ўстерес тĕлĕшпе усă курсан, нумай авантарах пулнă пулĕччĕ.

Выљăх апачĕпе мĕнле усă курнине сăнаса тĕрĕслесех тăмала, ăна кирлĕ марла салатса пĕтерме памала мар, перекетлĕ тыткаламала. Ҫитес кунсенче выљăхсен перепиҫĕ пулмала. Перепиҫ, выљăх ĕрчетес плана тума кирлĕ.

Выљăхсене пытарса хăварнисем ан пулчăр тесен, шута илес ĕҫе лайăх хатĕрленсе, лайăх ирттерме тăрăшас пулаť.

Выљӑхсен йышне упрасси, ӑна нумайлатасси йалсоветсен хаљхи тӗп ӗҫӗ пулаť.

1935 ҫул выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес фронтра талкӗшпе наступлени тумали ҫул пулса тӑмала.

Иккӗмӗш, ҫуракине лайӑх иртерме мӗн кирлине халех хатӗрлесе ҫитермеле: вӑрлӑхсем ҫителӗклӗ пулмала (мӗнле усранине, шӑтнине темиҫе хутчен тӗрӗслемеле), ӗҫ хатӗрсем пурте йурӑхлӑ, лашасем тӗреклӗ пулмала, тата ытти те.

Виҫҫӗмӗш, епӗр коллективизаци тӗлӗшпе малашне татах йулса пыма пултараймастпӑр. Йалсоветсен кашни тӳрӗ йединоличнике колхоза кӗртес тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр хытӑ ӗҫлемеле. Тӳрӗ йединоличниксене каласа парса тӑна кӗртме пӗлмеле, спекуљацийе ӳкнӗ йединоличниксем ҫаплипех пурӑнӑпӑр-ха, тесе шутланӑ ӗмӗтне тӑпӑлтарса пӑрахма пӗлмеле, кулак йенче тӑракан, колхоза хирӗҫ пыракан подкулачниксене тата ҫектантсене таса шыв ҫине кӑларма пӗлмеле, ҫак ӗҫре йалти пӗтӗм активпа тата мӗн пур саккун прависемпе саккун вӑйӗпе усӑ курмала.

Йединоличниксене кулак танатинчен хӑтарса колхоза пӗрлештересси йалсоветсен пысӑк задачи пулаť.

Тӑваттӑмӗш, йалсоветсен шкулсене, йалти куљтурлӑ учрежденисене йертсе пырассине вӑйлат-

мала. Лайăх ĕçлекен шкул, лайăх ĕçлекен трахом-пункт т. ыт. — йалсоветсен мухтавпа хисеп ĕçĕ пулса тăмала.

Йалсоветсем çак задачăсене патшалăх умĕнчи обйазатĕлствăсене вăхăтра лайăх татса пынипе пĕрле туса пыма ĕлкĕрмеле.

## 10. Чăваш республикинчи йалсоветсене кăтартулă ĕçлекенсем тăватпăр.

Ĕнтĕ, йулташсем, ĕçе кирлĕ пек тытăнар та, Советсен VII-мĕш сйесĕ тĕлне йалсоветсен ĕçне пур органсен ĕçне вырăнтан пуçласа çӳле çитиччен лайăх организацилер. Çапла вара йалсоветсене кăтартулă ĕçлекенсем туса, Чăваш республики 15 çул тултарнă йубилейе нихçан пулман çитĕнĕвсемпе кĕтсе илер. Чăваш республики 15 çул тултарнă йубилей йачĕпе йалсоветсен республикăри конкурсне пуçарар. Конкурса мĕн пур депутатсене, активиссене хутшăнтарар. Çапла вара пирĕн йалсоветсем крайпе тата федерацине, çывăхри вăхăтрах пĕтĕм Сойузĕпе те примерлă ĕçлекенсем пулса тăччăр. Çакна пурнăçа кĕртме йалсоветсен пурин те иккĕмĕш пйатилеткăн задачисене пурнăçлама, социалисăмлă обшчĕствă тума тачăрах пĕрлешмеле.

Пур рабочисен, пур колхозниксен, пур ĕççыннисен пуйан та куљтурлă пурăнăçĕшĕн кĕрешме, малала! (Тăвăлăн алă çупаççĕ).

## Советсен отчотпа суйлав кампанин малтанхи итогĕсемпе йалсоветсен ĕçĕсене организацилесси çинчен

**(Чăваш АССР ПСК(б)П Обкомĕн V пленумĕ йышăннă постановлени).**

ПСК(б)П Облăçри комитет пленумĕ, советсен суйлав кампанийĕ суйлавçăсен политикăла тата производствăла хастарлăхĕ ÿссе пынипе иртнине палăртать. Отчот пуххисене суйлавçăсем 1930 ç. 51,7 процент пухăннă пулсан, кăçал 80 процент пухăннă. Суйлав пуххисене 1930 ç. 24,7 процент çÿренĕ пулсан, кăçал 68 процент çÿренĕ. Советсен суйлавĕнче суйлавçăсем, уйрăмах хĕрарăмсем активлă пулчĕç: суйлавра суйлавçăсенчен 1930 ç. 63 процент пулнă пулсан, кăçал 92 процент пулнă; хĕрарăмсем 1930 ç. 48 процент пулнă пулсан, кăçал 86 процент пулнă.

Шăмăршă, Кĕçĕн Йелчĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсем парти организацисене, советсене, комсомол, профсойуз организацийĕсене лайăх мобилизациле-

нипе советсене суйланă çĕре суйлавçăсене 96—97 процент таран пухăнтарма пултарнă. Отчот тата суйлав пуххисенче самокритикăна сарлакан сарса йанă. Отчотсене сӳтсе-йавасси советсен, уйрăм депутатсен ĕçĕсене чăннипех тĕрĕслени пулса тăнă.

Кăçалхи суйлав кампанинче партипе комсомол организацийĕсем советсене кĕртме кандидатсем палăртса пăхса тухас ĕç çине чылай тимлĕнрех, лайăхрах пăхрĕç, советсен составĕ чылайах лайăхланчĕ халĕ.

1930 çулта советсен составĕ çапла пулнă: ПСК(б)П членĕсемпе кандидатсем — 4,8 процент, ПСÇЛКС членĕсемпе кандидатсем—7,4 процент, хĕрарăмсем — 24,3 процент, колхозниксем—20,4 процент.

Халĕ йалсоветсен составĕнче: ПСК(б)П членĕсемпе кандидатсем—8,5 процент, ПСÇЛКС членĕсемпе кандидатсем —13,5 процент, хĕрарăмсем— 29 процент, колхозниксем—88 процент.

Пур районсенче те СССР Тĕпĕçтăвкомĕ „1934—35 çулта советсене суйласси çинчен“ чĕнсе каланине сарлакан сӳтсе-йавнă. Йалсовечĕсем советсен 7-мĕш сиесĕ йачĕпе пыракан похода чăннипех хутшăннă, хуçалăхпа политикăла кампанисене ăнăçлăн вĕçлесе çитерчĕç, колхозсене малала ӳстерме пултарчĕç. Улатăр районĕнче суйлав кампани вăхăтĕнче колхозсене çĕнĕрен 300 хуçалăх ытла хутшăнтарнă. Йетĕрне районĕнче — 163 хуçалăх, Сĕн-

тĕрвăрри районĕнче—148 хуçалăх, Шупашкар районĕнче—136 хуçалăх, тата ытти те.

Апла пулин те, çав çитĕнӳсемпе пĕрлех ПСК(б)П Обком пленумĕ советсен суйлав кампанине иртернĕ çĕрте пулнă тĕп çитменлĕх çакă тесе шутлать: Йĕпреç, Патăрйел тата Пăрачкав районĕсем парти организацисене, советсене, комсомола, профсойуза тата суйлавçăсен ӳснĕ политикăла активлăхне кайа йулса пынине пĕтерме, паллă хуçалăхпа политикăла задачăсене (халăх укçи-тенкине пухасси, вăрман хатĕрлевĕ, 1935 çулхи çуракине хатĕрленесси, выльăхсене хĕллене хатĕрленесси, выльăхсене сыхлассишĕн кĕрешесси, тата ытти те) пурнăçлама мобилизацилеме пултарайман.

Уйрăм районсем: Канаш, Патăрйел, Йĕпреç районĕсем тата Улатăр хули суйлав комиççи малтанах советсен отчотпа суйлав кампанине хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе ĕçхалăх масси хушшинче массăлă-политикăла ĕçе çителĕклĕ таран сарса йаман, советсене суйламали инструкцийе пăснă, суйлавра оперативлă йертсе пырассине организацилемен. Çавăн пирки вара çав районсенче суйлав пуххисене суйлавçăсем 63—75 процент кăна çӳренисем те пулнă, тата халăх пухăнман пирки отчотпа суйлав пуххисем саланса кайнисем те пулнă.

Уйрăм йалсенче партипе комсомол организацийĕсем кандидатсем уйăрасси çине çителĕклĕ таран

тимлĕн пăхман Йалсоветсен суйлав комиççийĕсе не тата советсене уйăрнă кандидатсен составне класс йенчен йут елементсем кĕрсе кайнисем пулнă (Шăмăрш, Тутар Сăкăт, тата ытти те). ПСК(б)П Обкомĕ тата Чăваш АССР суйлавсен тĕп комиççи оперативлă йертсе пынипе вăл çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерне.

Республикăра пĕтĕмĕшпе илсен советсенче хĕрарăмсен йышĕ ӳснĕ пулсан (1930 çулта 24 процент пулнă пулсан, халь 29 процент), уйрăм районсем Сталин й. каланипе—ĕçхĕрарăмĕсен обчăлă-политикăла активлăхĕ ӳссе пыни, вĕсене йертсе пыракан вырăнсене партни пирĕн культурă ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕх пулать тенине хак паман. Çавăн пирки вара Йетĕрне районĕнче советсен составĕнче хĕрарăмсем 22 процент кăна, Пăрачкав районĕнче—23 проц., Куславка районĕнче—25 процент. Шăмăршă районĕ тата йалсовет предçедателĕ пулма пĕр хĕрарăма та уйăрман.

1934 çулта суйланă советсен иккĕмĕш пйатилеткăн уйрăмах пăллă пысăк историлĕ задачине—классăр социалисăмла обчĕствă тăвас задачăна пурнăçа кĕртмеле. Партин тĕп çулйĕрне çирĕп тытса пырса, советсен партин XVII-мĕш сйесĕн решенийĕсенчен тухса тăракан хуçалăхла тата политикăла задачăсене пурнăçра туса пымала. Вăл задачăсем: пĕтĕм халăх хуçалăхне реконструкцилессине

вĕçлесе çитĕресси, талкăшпех колхоза куçассине вĕçлесе çитересси, çав никĕс çинче вара кулаксен йулашкийĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтересси, тырпул тухăçлăхне ӳстересси, социалисăмла йĕркепе выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатасси, колхозсене большевикла ĕçлекен, колхозниксене пуйан, кульлтурăлă пурăнакан тăвасси, ĕçхăлăхĕн пурнăç условийĕсене лайăхлатасси, капиталисăм йулашкийĕсене економикăра та, етем ăстăнĕнче те пĕтересси.

Çаксене шута илсе, ПСК(б)П Обком пленумĕ советсем умне çакăн пек задачăсем кăларса тăратать.

Йалхуçалăх йенĕпе: колхозсене организаципе хуçалăх йенчен малала тĕреклетсе пырса, социалисăмла йĕркепе выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатса, колхоз пурнăçĕн лайăх йенĕсене тĕрĕс, пĕлсе кăтартса, клас тăшманĕсемпе тата йĕркесĕре тухнă, спекуљацине парăннă йединоличниксемпе ним хĕрхенмесĕр кĕрешсе, йалсоветсен тӳрĕ ĕçлекен ĕçсыннисене – йединоличниксене колхозсене кĕртес тĕлĕшпе кулленех тимлĕн ĕçлемеле.

Чăваш АССР Советсен Х-ш сийесĕ тĕлне вăрлăх тата страховой фондсене пĕтĕмпех хывса çитермеле, йалхуçалăх машинĕсене йусаса, суртлă вăрлăхсем улăштарса пĕтермеле, çапла вара çуракине хатĕрленессине тĕрĕс туса пырса, çанталăк условийĕсем кирек мĕнле пулсан та 1935 çулта пĕр

гектартан 75—80 центнёртан кайа мар тёш тырă илмеле тăвас пулаť.

**Выљăх-чёрлёх ёрчетессине** вăйлатас йенёпе советсем тёпрен илсе çавăрăнса пăхмали задачăсем—выљăх-чёрлёх ёрчетес йенёпе патшалăх планне ним пăркаланмасăр тултарасси, выљăх-чёрлёхе салатакансемпе тата выљăхсен йышне чакаракансемпе татăклăн кёрешесси, таварлă фермăсен выљăхсен йышне планпа пăхнă таран, тата паха выљăхпа хутшăнтарасси, выљăхсене чи лайăх хёл каçарассине организацилесси, выљăх витисем тăвассипе вёсене ăшăтассине хăвăрт пётерессы, мён пур выљăхсем валљи çителёклё таран выљăх апачё хатёрлесси, чуптару ёçне организацилесси, колхозниксем ёнесёр пурăнассине пётёмёшпех пётересси пулаť.

**Промышлённăç йенёпе** советсем умёнче тăракан паллă задачăсем çаксем пулаççё: предприйатисен промфинпланёсене хисеп йенчен те тата пахалăх йенчен те тултарассишён, продукци пахалăхне лайăхлатассишён продукци туса кăларма кирлё расхута чакарассишён, тата рабочисен куљтурăпа йăла условийёсене лайăхлатассишён кёрешме рабочисен массине мобилизацилесси.

Советсен 1934 çулхи промфинплана пётёмёшпех тултармала тăвас пулаť.

Çакăнпа пёрлех, райёçтăвкомсемпе хула совчё-

сен уйрăмăнах строительства материалĕсемпе куллен кирлĕ продуктăсене тăвакан вырăнти промышленнăçа ÿстересси çине, аласталăх кооперацийĕпе унăн предприйатийĕсен ĕçне лайăхлатасси çине çаврăнса пăхмала.

Кулътурăлă строительства йенĕпе советсен çинетăрсах шкулсемпе вулав çурчĕсен, клубсен, больницăсен, трахомпа кĕрешекен пунктăсен ĕçне ла йăхлатмала. 1935 çулта ÿссе çитнĕ халăх хушшинче хугла пĕлеменлĕхе пусĕлех пĕтермеле, трахомпа кĕрешес ĕçе кăтартулă организацилемеле.

Советсен пирвайхи ĕçĕ — патшалăх умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра пурнăçласси пулмала. Советсен ĕçĕнчи çапăçулă задачă — Чăваш республикинчи советсен 10-мĕш сйесĕ тĕлне пур хуçалăхпа политикăлă кампанисене те вĕçлесе çитересси пулаť. Партипе правительства политикине пурнăçласа пынă май, клас сисĕмлĕхне хăпартса, советсем социалисăм харпăрлăхне сыхлама, революцилĕ саккунлăха çирĕппĕн пурнăçлама тивĕçлĕ.

Çулйĕр строительствипе Чăваш республики 4 çул хушши ĕнтĕ малти вырăнта тăраť. Çĕнĕрен суйланă йалсовечĕсен паллă задачĕ вăл — çулсене, кĕперсене тата лайăхрах тăвасси, тата лайăхрах тытасси, йăвăç лартассине вăйлатасси пулаť.

Çак, социалисăм строительствинчи задачăсене — партин тĕп çулйĕрне пурнăçлас ĕçре советсен вы-

рăнне хăпартнипе, халăх комиссариачĕсен, тĕп учрежденисен районри организацисен, йалсовечĕсен пĕтĕм организацилĕ ĕçне тĕпрен çĕнетнипе, тата партипе правительствă решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслессине лайăхлатнипе кăна пурнăçлама пулать.

ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ çапла йышăнать:

1. Парти организацийĕсен, халăх комиссариачĕсемпе тĕп учрежденисене, организацисене йертсе пыракан йулташсен харпăрхăй ĕçĕсене халех çĕнетсе çитермеле. Вырăнсене конкретлă та уйрăмăн йертсе пырассине организацилесе, партипе правительствă панă кăтартусене вăхăтра пурнăçлаттармала. Ĕç тунине руководителсен харпăрхăйсен тĕрĕслемеле, районсемпе йалсовечĕсене пулăшу парас тĕлĕшпе инструктăрсен ĕçĕнчи ответлăхпа пахалăхне хăпартмала.

2. Хăшпĕр райĕçтăвкомсем йенчен (Аслă Патăрйел, Çĕрпӳ) йалсовечĕсене пĕр администрацилĕ йĕркепе кăна, бӳрократла йертсе пынисем пулнине пăлăртса, райкомсемпе райĕçтăвкомсене пленум малашне советсене оперативлă, кашнă йалсовечĕпе кашнă колхоза тĕплĕн сăнанă тăрăх, йертсе пырассине, вĕсене ĕçпе практикăлă пулăшу парассине организацилеме, йалсовет председателĕсене Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе килĕшмесĕр ĕçрен кăларассине пĕтерме хушать.

3. Райкомсемпе районтӑвкомсен 1934 çулхи декабӗрӗн 20-мӗшӗнчен çекцисемпе депутат ушкӑнӗсене организацилесе çитермеле. Çекцисемпе депутат ушкӑнӗсен руководитӗлне чи лайӑх йалсовет членӗсенчен уйӑрмала туса, хулапа йалсовечӗсене çекцисемпе депутат ушкӑнӗсен ӗçне организацилес, вӗсен ӗçне пур совет членӗсемпе кандидачӗсене тата пӗтӗм актива (производствӑри ударниксене, учитлӗсене, агрономсене, врачсене, хӗрарӑмсене т. ыт. те) хутшӑнтарас тӗлӗшпе практикӑлӑ пулӑшу памала.

4. Халӑх комиссариачӗсене, тӗпри учрежденисемпе организацисене вырӑнти пӗтӗм практикӑла ӗçсене секцисемпе депутатсен ушкӑнӗсем çине тайӑнса, вӗсемпе çыхӑнса туса пыма хушас. Икӗ ерне хушшинче кашни çекцин, депутат ушкӑнӗн мӗнле ыйтусем тӑрӑх татӑклӑн ӗçлемелине кӑтартакан кӑтарту туса вырӑнсене çитермеле. Пӗр уйӑх хушшинче çекцисемпе депутат ушкӑнӗсен положенийӗне пӑхса тухса пичетлесе кӑлармала.

5. ПСК(б)П Обком пленумӗ тӗпри учрежденисен руководитӗлӗсене, райкомсене тата районтӑвкомсене инструктӑрсемпе инспектӑрсен йышне çирӗплетме, вӗсен производствӑлӑ квалификацине хӑпартма, йалсоветсене, вӗсен массӑлӑ оргӑнӗсене — секцисемпе депутатсен группισене ӗçре пулӑшас ответлӑхне хӑпартма хушать. Советсен, вӗсен çек-

цисен, депутат ушкăнĕсен, руководителсен лайăх ĕçĕсене вĕренсе пырас ĕçе, вĕсен ĕçĕсем çинчен тĕприпе районсенчи хаçатсенче кулленех çутатса тăрассине организацилемеле.

6. Советсем революцилĕ саккунлăха пурнăçа кĕртсе пырассине татах та вăйлатчĕр тесе райкомсене, райĕçтăвкомсене, Йуçтици халăх комиссариатне тата унăн вырăнти оргăнĕсене инструкцилес ĕçе вăйлатса, районсенче вăхăтран вăхăта йатарласах канашлусем пухса тата пичет урлă йалсоветсенче ĕçлекенсене парти решенийĕсене совет правителствин саккунĕсене вĕрентессине организацилеме хушас.

7. ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ Обком бÿроне вырăнти советсенче ĕçлекен кадăрсене хатĕрлемели план тума хушаť. 1935 çулга 200 йалсовет председателĕсем, 200 йалсовет çекретарĕсем, 1000 çын çекцисене йертсе пыракансем хатĕрлемеле. Пуринчен ытла хĕрарăмсенчен кадăрсем хатĕрлесси çине тимлерех пăхмала.

ПСК(б)П Обком пленумĕ районсенчи партипе совет оргăнĕсене йалти активăн политикăла пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе кулленех ĕçлесе пырассине организилеме, политикăла кĕнекесем çителĕклĕ тупса пама 1935 çулхи февралĕн 1-мĕшчен йатарласах курс-канашлусем организилесе партин 17-мĕш сйесĕн, парти Тĕпкомĕпе ПСК(б)П Обкомĕн но-

йабӗр уйӑхӗнчи пленумӗсен, советсен сӗесӗсен решенийӗсене сӳтсе-йавас ӗҫе — вӗҫлесе ҫитерме хушас.

8. ПСК(б)П Обкомӗн советпа суту-илӳ пайне тата Тӗпӗҫтӑвкомӑн оргпайне 1935 ҫулхи йанвар уйӑхӗнче пӗтӗм хӗрарӑм йалсовет председателӗсене тата йалсоветсенчи выљӑх-чӗрлӗх, уй-хир, куљтура секцисен руководителӗсене 150 ҫынтан кайа мар пухса, 1935 ҫулхи феврањ уйӑхӗнче 200 йалсовет председателӗсенчен кайа мар пухса, 5 - 7 кунлӑх канашлусем туса иртерме хушас.

9. Пленум — йалсоветсен канцељари ҫурчӗсем, ҫуртри хатӗрсем начаррине палӑртса, йалсоветсем ваљљи ҫуртсем тума стандартлӑ тип туса, строителствӑ ӗҫне пуҫарса йама кирлӗ тесе шутлать. 1935 ҫулта кашни районра ҫавӑн пек стандартлӑ ҫуртсем 2—3 тумала.

Райӗҫтӑвкомсен йалсоветсене чи лайӑх ҫуртсем памала, бӳджетри укҫа-тенкӗсемпе тата ытти тупӑшсемпе усӑ курса йалсоветсен ҫурт ӑшчиккисене тӗплӗн тумала, унта кирлӗ йапаласем: сӗтел-пукансем, лампӑсем, т. ытти те ҫителӗклӗ пулмала. 1935 ҫулта пур йалсоветсене те телефон кӗртес.

10. Советсен пӗтӗм ӗҫ пахалӑхне хӑпартас тесе, вӗсем хуҫалӑхпа политикӑла задачисене, тата суйлакансен наказӗсене лайӑхрах пурнӑҫа кӗртчӗр тесе Чӑваш республики 15 ҫул тултарнӑ йатпа со-

ветсен республикӑри конкурс-ӑмӑртуне пуҫарса йарас.

ПСК(б)П Обком пленумӗ—большевикла самокритикӑна сарса йанипе, советсене ҫирӗплетнипе, вӗсен клас сисӗмлӗхӗпе ӗҫри пултарулӑхне хӑпартнипе, тата ӗҫе тӗпренех ҫӗнетнипе Чӑваш республикинчи советсем классӑр социалисӑмла обчӑ тӑвакан иккӗмӗш пйатилеткӑри пысӑк задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртӗҫ тесе шанать.

Хакĕ 15 пус
Цена 15 коп.

С. П. ПЕТРОВ

# ПО-БОЛЬШЕВИСТСКИ ОРГАНИЗУЕМ РАБОТУ СЕЛЬСКИХ СОВЕТОВ

ЧУВАШГОСИЗДАТ—ПАРТСЕКТОР
Чебоксары — 1934